# О Константине Иванове: высказывания и посвящения

*на чувашском языке*

Пуринчен ытла «Нарспире» палăрнă Ивановăн генийĕ чăваш культурин шăпине, Яковлев пекех, – анчах хăйне майлă, хăй вăхăтĕнче, – пĕтĕм малашлăхшăн татса пани теме пултаратпăр эпир. Ку пире йăлтах тĕлĕнтерсе яратъ. Виçĕ пин йĕрке сăвăра ĕлĕкхи чăваш пурнăçĕн пĕтĕм энциклопедийĕ курăнать.

*Петĕр Хусанкай, чăваш халăх поэчĕ*

*Чăваш поэзийĕн çăлтăрĕ : литературăпа музыка композицийĕ / Чăваш Республикин наци библиотеки ; хатĕрл. П. А. Семенова, А. В. Матросова. – Шупашкар, 2005. – С. 20.*

Константин Васильевич Иванов пĕтĕм пурнăçне, çиçсе тăракан тивлетлĕ талантне пĕтĕмпех чăваш халăхне панă. Вăл чăваш литературине классикла тӳпине çĕкленĕ, унăн сăпки умĕнче хăватлă юрăсем юрланă, хăйĕн ывăçĕ çинчен çитес ĕмĕрсене, малашлăха «Нарспи» поэмине вĕçтернĕ.

*Яков Ухсай, чăваш халăх поэчĕ*

*Константин Иванов : фотоальбом. – Чебоксары : Чуваш. кн. изд-во, 1990. – С. 71.*

К. В. Иванов ячĕ – чăваш историйĕнче вăхăт та, ĕмĕр те тĕксĕмлетеймен ят. Кĕçтенттин ячĕ ĕмĕр-ĕмĕрех çуталса тăрĕ, ăна пурте таса чунпа аслă вĕрентекен вырăнне хурса хаклĕç. «Нарспи» вăл – чăваш поэзи çĕршывĕн çăлкуçĕ, унăн симне тутанса пăхакан вăй илет, çĕнĕрен çамрăкланать.

*Геннадий Волков, этнопедагог, профессор*

*Чăваш поэзийĕн çăлтăрĕ : литературăпа музыка композицийĕ / Чăваш Республикин наци библиотеки ; хатĕрл. П. А. Семенова, А. В. Матросова. – Шупашкар, 2005. – С. 20.*

Кĕмĕл шăнкăрав сасси пек шăнкăртатса юхать Константин сăвви. Сăввăн кашни сăмахĕ илемлĕ, уçă, вырăнлă, чуна илĕртет. Халиччен илтмен çакăн пек витĕмлĕ сăмахсем, пĕрре чуна çӳçентерсе, тепре чуна çутă шанчăкпа хавхалантарса е йăвашшăн, лăпкăн янăраса, пирĕн чĕресене хумхантарса тăраççĕ. Константин ывăçĕ-ывăçĕпе çĕнĕ туйăмсем акса пырать.

*Степан Лашман, чăваш писателĕ*

*Константин Иванов : фотоальбом. – Чебоксары : Чуваш. кн. изд-во, 1990. – С. 70.*

К. Иванов – халăх поэчĕ, мĕншĕн тесен вăл халăхăн çутă шухăш-ĕмĕчĕсемпе пурăннă, уншăн таса кăмăлпа ĕçленĕ, çавăнпа унăн пултарулăхĕ чăваш халăхĕшĕн çеç мар, пĕтĕм тăванла халăхсемшĕн çывăх пулса тăчĕ. Унăн ячĕ чăваш литератури ӳсĕмĕнче чăн-чăннипех çутă Шурăмпуç çăлтăрĕ пек çиçсе тăрать.

*Михаил Сироткин, литература тĕпчевçи*

*Чăваш поэзийĕн çăлтăрĕ : литературăпа музыка композицийĕ / Чăваш Республикин наци библиотеки ; хатĕрл. П. А. Семенова, А. В. Матросова. – Шупашкар, 2005. – С. 20.*

Чăвашсен малтанхи поэт-просветителĕ тата демокрачĕ Константин Иванов çырнă «Нарспи» поэма – вăйлă та хăйне евĕрлĕ произведени, унта халăх поэзийĕн пуянлăхĕпе ырлăхĕ сĕтеклĕ палăрса тăрать.

*Александр Твардовский, вырăс писателĕ*

*Чăваш поэзийĕн çăлтăрĕ : литературăпа музыка композицийĕ / Чăваш Республикин наци библиотеки ; хатĕрл. П. А. Семенова, А. В. Матросова. – Шупашкар, 2005. – С. 20.*

Иванов чĕлхи вăл – кристалл пек таса, чăн-чăн поэзии чĕлхи, хресчен чĕлхин «тап-таса копийĕ», унта ятарласа шухăшласа кăларнă сăмахсемпе витĕнсе хуçланкаласси – ют япала. Чăн та, Иванов кĕнекисенче чылай çĕрте чăваш халăх юррисенчен илнĕ тĕслĕхсем, вĕсен витĕмĕ палăрать, çапла пулин те, ку чĕлхе хăйне евĕрлĕ; поэзии мелĕсемпе çавăн пек сăнарлама, çавăн пек тĕрĕлеме чăннипех пултарулла, тĕнче литературин шайне çĕкленнĕ поэт кăна пултарать…

*Андраш Рона-Таш, венгр чĕлхеçи*

*Константин Иванов : фотоальбом. – Чебоксары : Чуваш. кн. изд-во, 1990. – С. 88.*

Чаплă поэма «Нарспи» çур ĕмĕре яхăн ĕнтĕ вулакансен чĕрисенчен туха пĕлмест, вăл халăх чĕрине, шухăш-кăмăлне шаларах та шаларах кĕрсе

пырать. Мĕншĕн çавăн пек-ши вăл? Мĕншĕн «Нарспие» кашниех юратса вулать?

Мĕншĕн тесен К. Иванов çырнă «Нарспие» пурнăç çуратнă, вăл пурнăçпа ӳснĕ, пурнăçпа пĕрле утакан вилĕмсĕр поэма.

*В. А. Долгов, литература тĕпчевçи*

*Константин Иванов : фотоальбом. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1990. – С. 83.*

Чăваш Джокондийĕ!..
Сыв пурăн ĕмĕр
Эс халăх чĕринчи юратупа.
Сана çуратнă кăмăллă чĕлхемĕр
Хавхаланма маттур сăнарупа.

*Н.Теветкел, чăваш поэчĕ*

*Теветкел, Н. [К. В. Иванова]/ Н. Теветкел // Константин Иванов : фотоальбом. – Чебоксары : Чуваш. кн. изд-во, 1990. – С. 125.*

Чăваш чĕлхи пур чух
Тăван поэт ятне
Вĕри, кăвар чунсем
Савма пăрахас çук.

*Çеçпĕл Мишши, чăваш поэзийĕн классикĕ*

*Çеçпĕл, М. [К. В. Иванова] / Çеçпĕл Мишши // Чăваш поэзийĕн çăлтăрĕ : литературăпа музыка композицийĕ / Чăваш Республикин наци библиотеки ; хатĕрл. П. А. Семенова, А. В. Матросова. – Шупашкар, 2005. – С. 18.*

Сăмахна, юрруна, тĕррӳне сăнласамччĕ –
Вĕсенче çитмĕл çичĕ тĕспе
Йăлкăшать çивĕч ăс та илем асамачĕ,
Ырă чун ăшăтать ăшшипе.
Вĕсене тимлĕрех упрама ан мансамччĕ,–
Хăватланăн вĕсен сассипе.

*Г. Юмарт, литература тĕпчевçи, поэт*

*Юмарт, Г. [К. В. Иванова] / Г. Юмарт // Чăваш поэзийĕн çăлтăрĕ : литературăпа музыка композицийĕ / Чăваш Республикин наци библиотеки ; хатĕрл. П. А. Семенова, А. В. Матросова. – Шупашкар, 2005. – С. 18.*

Эп тарăн шухăша кайса тăратăп
Çак мрамор палăк умĕнче ялан.
Чăвашăн иртнĕ ĕмĕрне куратăп,
Унта вĕçсе çитсе ăсăмпалан.

*А. Алка, чăваш халăх поэчĕ*

*Алка, А. [К. В. Иванова] / А. Алка // Чăваш поэзийĕн çăлтăрĕ : литературăпа музыка композицийĕ / Чăваш Республикин наци библиотеки ; хатĕрл. П. А. Семенова, А. В. Матросова. – Шупашкар, 2005. – С. 19.*

## *на русском языке*

Гений народа (да, без всякого преувеличения – это был гений), прежде всего проявившийся в «Нарспи», так же, как кипучая деятельность Яковлева, – только в иное время, в иных условиях и иными средствами, – определил судьбу всей чувашской культуры. Он вдохнул в народ веру в свои творческие возможности, разбудил своей волшебной свирелью потенциальные силы.

*П. Хузангай, народный поэт Чувашии*

Я никогда не перестану удивляться и поражаться чуду, имя которому – Константин Иванов. О нем я сужу не только по его широкой славе, а по свету, звучанию, аромату, по сути каждой его поэтической строки. Ибо как сопереводчик «Нарспи» на башкирский язык я испытывал неописуемый праздник в себе от прикосновения к этому шедевру, от причастности к нему. В Иванове я вижу высшее проявление раскованного творящего духа нации. Он дал беспредельную свободу чувашскому слову и долговечную жизнь ему. Это был неповторимый взлет.

*Мустай Карим, народный поэт Республики Башкортостан*

В творчестве Константина Иванова меня привлекает чудо не «реконструированного», а «вновь обретенного», «возвращенного нам» именно такого изначального поэтического отношения к космосу. Поражает

то, что юноша сумел совершить это чудо в абсолютно зрелой форме, несмотря на то, что он не мог опираться на многовековое развитие письменной традиции.

*Леон Робель, французский поэт и литературный критик*

Иванов, бывший в моей жизни «чувашским Пушкиным»… – первый крупный чувашский поэт и драматург, мастер поэтического перевода, первый чувашский мастер-фотограф, один из первых историков-этнографов, фольклорист, художник-живописец.

*Геннадий Айги, народный поэт Чувашии*

Константин Иванов внес золотую искру собственного дарования в общий благородный свет земли, свет разума всех народов.

*Сергей Михалков, поэт*

*Быкова, Г. Он вдохнул в народ веру / Г. Быкова // Совет. Чувашия. – 2000. – 27 мая. – С. 3.*